Çирĕплетнĕ:
Чăваш чĕлхи инçет вĕренӳ центрĕн ертӳçи
______________ В. Ю. Андреев

# „Эпĕ пĕчĕкçĕ чăваш - 2018” сăвă вулакансен видеоконкурсĕ

## Тĕллевĕ

Конкурса чăваш чĕлхине аталантарас, ачасене мĕн пĕчĕкрен тăван чĕлхе илемне туйма вĕрентес, хайсен пултарулăхне аталантарас, аслисене ку ĕçе активлăрах хутшăнтарас тĕллевпе йĕркеленĕ.

## Кам хутшăнать?

Конкурса шкул çулне çитмен шăпăрлансем, шкул ачасем, вĕсен ашшĕ-амăшĕпе педагогсем хутшăнма пултараççĕ. Конкурс тӳлевсĕр иртет.

## Кам ирттерет?

Конкурса Чăваш чĕлхин инçет вĕренӳ центрĕ, Чăваш халăх сайчĕ, Чăваш ен наци радиотелекомпанийĕ, Чăваш наци конгресĕ, Чăваш наци библиотеки ирттереççĕ. Видеоконкурса йĕркелес тата унăн çĕнтерӳçисене чыслас ĕçе çавăн пекех Атнер Хусанкай ăсчахпа Николай Ишентей поэт хутшăнаççĕ. Конкурса ярса панă материалсене "ШкулТВ" интернет- телеканалта вырнаçтараççĕ. Конкурс итогĕсемпе "Шкулта" интернет журналта паллашма пулĕ, çавăнтах хутшăнаканăн электрон сертификачĕсене уçласа илме май килĕ.

## 2018 çулхи номинацисем

- "Эпĕ пĕчĕкçĕ чăваш: ача-пăча сăввисем" ; *(шкула кайманнисем валли)*
- "Эпĕ пĕчĕкçĕ чăваш: ача-пăча вăййисем";
- "Эпĕ пĕчĕкçĕ чăваш: ача-пăча юррисем";
- "Эпĕ пĕчĕкçĕ чăваш: пуçламăш класс сăввисем";
- "Эпĕ пĕчĕкçĕ чăваш: Митта Ваçлей сăввисем";
- "Эпĕ пĕчĕкçĕ чăваш: Николай Ишентей сăввисем";
- "Эпĕ пĕчĕкçĕ чăваш: чи лайăх видео".

Кашни номинацире, хутшăнакансен хисепне кура, çĕнтерӳçĕсен йышĕ 1 çынтан пуçласа 5 çын таран, хисеплĕ вырăн йышăннисен хисепĕ 2 çынтан пуçласа 15 çын таран пулма пултарать. Çавăн пекех конкурс ирттерекенсем уйрăм хутшăнакансене те, уйрăм коллективсене те тĕрлĕ майпа хавхалантарма пултараççĕ.

## Регистраци тата мĕн вуламалла е юрламалла?

Конкурса хутшăнма (юрлакансемсĕр пуçне) http://pecekse.chuvash.org сайта кĕрсе регистрациленмелле тата унта кăтартнă сăвăсенчен пĕрне суйласа илмелле. Регистрациленнĕ чухне пĕтĕмпех тĕслĕхри пек çырмалла, ытлашши информаци кĕртме кирлĕ мар, эсир мĕн çырни пĕтĕмпех сертификата куçать, ытла вăрăм çырсан вырнаçмасан та пултарать. **Регистрациленмен конкурсантсенчен килнĕ ĕçсене йышăнмастпăр.**

Юрлакансен регистрацилеме ыйтса çырнă заявление заявкăпа тата видеопа пĕрле civhim2@yandex.ru электрон адреспа ярса памалла. Юрăçсен видеоконкурсне ача-пăча

жанрне тивĕçтерекен юрăсене çеç йышăнаççĕ. Хăвăра регистрациленине http://pecekse.chuvash.org сайтра пĕлме пулать. Заявлени формине положени вĕçĕнче тупма пулать.

## Мĕнле ӳкермелле?

Сăвă вуласа паракансене кирек мĕнле видеоаппаратурăпа та ӳкерме юрать. Видеона конкурса ярса пама **ятарласа хатĕрлемелле**: видео пуçламăшĕнче сăвă ятне, авторне, кам вуланине, вăл хăш шкултан тата педагогĕ кам пулнине çырмалла. Çакна тума кирек мĕнле ансат видеоредакторпа усă курма юрать (калăпăр, кашни компьютерта тенĕ пекех пур Киностудия Windows Live программăпа). Ятарласа хатĕрлемен видеона конкурса йышăнмасан та пултараççĕ

## Ăçта ярса памалла?

Конкурс материалĕсене – видеофайла, заявкăна, заявленисене – civhim2@yandex.ru электрон адреспа ярса памалла. Заявленисемпе заявка видеопа е видео каççипе пĕр çырура пулмалла. Заявкăпа заявлени мĕнле çырмаллине положени вĕçĕнче тупма пулать. Енчен те видеофайла, пысăк пирки, электрон почтăпа ярса пама май килмест пулсан ăна **ЯндексДиск, Облако Mail** йышши управ сервисĕсене кăларса хурăр, файл каççине конкурса civhim2@yandex.ru электрон адреспах ярса парăр.

Видеофайл ятĕнче Шкул ячĕ (кĕске форма, регистрациленнĕ чухне çырнă пек!), хайлав авторĕ (пур пулсан), хайлавăн е вăйăн ячĕ, кам(сем) вулани е вылянине кăтартакан информаци пулмалла.
**Тĕслĕхсем:**
***Хурашашри тĕп шкул Халăх сăвви Пукан пичче Петрова Вероника Васильевна***
***Хурашашри тĕп шкул Вăйă Кăшманла Шкул ачисем***
***Хурашашри тĕп шкул Асамат С Тетте Петрова Вероника Васильевна***
***Хурашашри тĕп шкул Юрă Пулăра Петрова Вероника Васильевна***
Видеофайл е видеокаçă ятне урăхла çырсан ĕçсене йышăнмаççĕ, мĕншĕн йышăнманнине пĕлтерсе тăмаççĕ.
Ачасем хутшăннă чухне заявленисем виçĕ çыннăн кирлĕ - ача ашшĕ-амăшĕн, педагогăн тата операторăн, ытти чухне - хутшăнаканпа операторăн. Заявленисемпе тата заявкăна тĕрĕс мар хатĕрленĕ пулсан (алă пусман, пичет çук тата ытти те) вĕсене тата видеона йышăнмаççĕ, пăхса тухмаççĕ.
Текстсене пур çĕрте Юникод символĕсен таблицине кĕрекен чăваш сас паллийĕсемпе çырмалла *("Болгарски" е Н. Плотников хатĕрленĕ сарăмсемпе усă курмалла, çавăн пекех "CTRL+ALT+ символ" мелпе е хатĕр текстран копилесе илсе пичетлеме пулать).*

## Камсем тата мĕнле хаклаççĕ?

Конкурса ярса панă ĕçсене ятарласа йĕркеленĕ жюри членĕсем пăхса тухаççĕ. *(Положени вĕçĕнче пăхăр.)* Видеофайлсене вĕсен пахалăхне, ӳкерме пĕлнине, конкурса хутшăнакансем сăвва чăвашла тĕрĕс те таса калама, хăйсене камера умĕнче тытма пĕлнине кура хаклаççĕ, юрланине жюрине кĕнĕ юрă ăстисем хак параççĕ Хутшăнакансем пĕтĕмлетӳпе килĕшменнине, хирĕçленине йышăнмаççĕ, пăхса тухмаççĕ.

## Конкурс тăсăмĕ тата чыславĕ

Конкурс нарăсăн15-мĕшĕнчен пуçласа ака уйăхĕн 1-мĕшĕччен пырать. Конкурс çĕнтерӳçисене ака уйăхĕн вĕçĕнче Чăваш наци библиотекинче чыслаççĕ . Хăçан тата хăш вăхăтра хакчысласси кашнине уйрăммăн телефонпа е электрон почтăпа тата конкурса ирттерекенсен интернет ресурсĕсенче пĕлтереççĕ. Хутшăнакансене пурне те конкурса

хутшăннине ĕнентерекен электрон сертификат параççĕ, вĕсене "Шкулта" интернет журналтан уçлласа илме пулĕ.

## Автор прави пирки

Конкурса ярса паракан материалсенче ытти авторсен прависене пăсакан материалсем е вĕсен фрагменчĕсем пулмалла мар. Кам ўкернине, вулакан хайлав камăн, вулаканĕ кам пулнине кăтартман е автор правине мĕнле те пулин пăсса хатĕрленĕ видеона конкурса йышăнмаççĕ. Фонограммăпа е минусовкăпа усă куракансен авторĕнчен ирĕк илмелле, видеора хушаматне, ятне кăтартмалла. Çавăн пекех пĕтĕм информацие заявкăра та кăтартмалла (формине положени вĕçĕнче панă).  Пĕр хайлавран ытларах ўкернĕ пулсан видеосем те çав хисеп чухлĕ пулмалла, заявкăра вĕсен уйрăмлăхне цифрăсемпе палăртмалла. "Эпĕ пĕчĕкçĕ чăваш - 2018" видеоконкурса хутшăнни эсир ярса панă видеопа Чăваш чĕлхин инçет вĕренў центрĕ туллин тата пур енлĕн усă курма ирĕк илнине пĕлтерет.

## Хутшăнмалли ирĕксемпе чарусем

Конкурса 2017 çулта ўкернĕ ĕçсем кăна хутшăнма пултараççĕ. Килĕшўсĕр, кăмăл-сипете тивĕçтермен, автор прависене пăсма пултаракан видеоматериала конкурса йышăнмаççĕ, мĕншĕн йышăнманнине ăнлантармаççĕ. Çĕнтерўçĕсем шутĕнче пĕр хайлавах вуланă конкурсантсем пулма пултараймаççĕ. Çакна регистрациленнĕ чухне шута илме сĕнетпĕр.

**1-мӗш хушӑм**

**<u>Жюри членӗсем:</u>**

Андреев Владимир Юрьевич - Чӑваш чӗлхин инҫет вӗренӳ центрӗ

Федорова Ирина Николаевна - Чӑваш чӗлхин инҫет вӗренӳ центрӗ

Осипова Лилия Алексеевна - Чӑваш чӗлхин инҫет вӗренӳ центрӗ

Рыбкина Елена Владимировна - Чӑваш чӗлхин инҫет вӗренӳ центрӗ

Плотников Николай Алексеевич - Чӑваш халӑх сайчӗ

Никифоров Геронтий Лукиянович - Чӑваш наци конгресӗн вӗренӳ комитечӗн ертӳҫи

Яковлева Зоя Аркадьевна -- Чӑваш наци конгресӗн пресс-служба ертӳҫи, режиссер

Анисимова Юлия Елисеевна - Чӑваш наци конгресӗн вӗренӳ комитечӗн ертӳҫин ҫумӗ

Герасимова Алина Васильевна - Чӑваш ен наци радиотелекомпанийӗ

Петрова Мальвина Владимировна - Чӑваш ен наци радиотелекомпанийӗ

Прокопьев Олег Иванович - Чӑваш Республикин вӗренӳ институчӗ

Егорова Надежда Тимофеевна - Чӑваш Республикин наци библиотеки

Хусанкай Атнер Петрович - ӑсчах

Ишентей Николай Петрович - сӑвӑҫ

Петрова Екатерина Владимировна - юрӑҫ

Федорова Алина Никифоровна - юрӑҫ

Кинер Людмила Ивановна - юрӑҫ

**2-мĕш хушăм**

***Заявка формисем***

Аслисем валли

| **Конкурса хутшăнаканăн хушамачĕ, ячĕ, ашшĕ ячĕ** | **Электрон почта е телефон** | **Ĕç е пурăнакан вырăнĕ** | **Номинаци ячĕ** | **Хайлав ячĕ** | **Хайлав (сасă) авторĕ(сем) (ячĕ, хушамачĕ)** | **Видео ÿкерекенĕн хушамачĕ, ячĕ, ашшĕ ячĕ** | **Видео ÿкерекенĕн ĕç е пурăнакан вырăнĕ** |
|---|---|---|---|---|---|---|---|
| | | | | | | | |
| ***Тĕслĕх:*** *Иванов Иван Иванович* | ***Ivan3@mail.ru*** | *Çĕрпÿ районĕ, Чурачăк ялĕ* | *Эпĕ пĕчĕкçĕ чăваш: ача-пăча сăмахлăхĕ* | *Витлешÿ сăвви* | *Халăх сăмахлăхĕ* | *Иванова Анна Ивановна* | *Çĕрпÿ районĕ, Чурачăк ялĕ* |
| | | | | | | | |

| **Конкурса хутшăнаканăн хушамачĕ, ячĕ, ашшĕ ячĕ** | **Шкул, садик** | **Миçе çулта** | **Педагогĕ** | **Электрон почта е телефон** | **Номинаци ячĕ** | **Хайлав ячĕ** | **Хайлав (сасă) авторĕ(сем) (ячĕ, хушамачĕ)** | **Видео ÿкерекенĕн хушамачĕ, ячĕ, ашшĕ ячĕ** | **Видео ÿкерекенĕн ĕç е пурăнакан вырăнĕ** |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| | | | | | | | | | |

***Ачасем валли***

**3-мĕш хушăм**

***Заявлени формисем***

***чăвашлисем — 5,6-мĕш хушăмсем***

*Для участников* ***педагогов, родителей, операторов*** *съемки*

**Заявление на использование персональных данных**

Я, ___________________________________________________________________________________

(Ф. И.О. гражданина)

в соответствии с требованиями ст. 9 Федерального закона РФ «О персональных данных», подтверждаю свое согласие на обработку Центром дистанционного обучения чувашскому языку (далее – Оператор) моих персональных данных (фамилии, имени, отчества, места работы, должность)

____________________________________________________________________________________

(документ, удостоверяющий личность гражданина, серия, номер, кем и когда выдан, адрес)

____________________________________________________________________________________

____________________________________________________________________________________

Я согласен (а), что мои персональные данные будут использоваться при формировании публикации в средствах массовой информации и составлении сводного списка (ведомости) участников награждения ценными подарками и памятными сувенирами.

Я проинформирован (а), что под обработкой персональных данных понимаются действия (операции) с персональными данными, включая сбор, систематизацию, накопление, хранение, уточнение (обновление, изменение), использование, распространение (в том числе передачу), обезличивание, блокирование, уничтожение персональных данных соблюдается в рамках исполнения Оператором законодательства Российской Федерации.

Я даю согласие на размещение видеоматериала с моим участием на интернет телеканале (ШкулТВ).

Настоящее согласие действует со дня подписания до дня отзыва в письменной форме.

______________ __________________________ __________

(Дата) (Фамилия, инициалы) (Подпись)

*Для участие* ***несовершеннолетних детей***

**Заявление на использование персональных данных (на несовершеннолетних)**

Я, ___________________________________________________________________________________

(Ф. И.О. законного представителя несовершеннолетнего гражданина)

в соответствии с требованиями ст. 9 Федерального закона РФ «О персональных данных», подтверждаю свое согласие на обработку Центром дистанционного обучения чувашскому языку (далее – Оператор) персональных данных моего (ей) несовершеннолетнего (ей) сына (дочери):

(фамилии, имени, отчества, места работы, должность)

____________________________________________________________________________________

(Ф. И.О. несовершеннолетнего гражданина)

____________________________________________________________________________________

(документ, удостоверяющий личность гражданина, серия, номер, кем и когда выдан, адрес)

____________________________________________________________________________________

____________________________________________________________________________________

Я согласен (а), что персональные данные моего (ей) несовершеннолетнего (ей) сына (дочери) будут использоваться для публикации в средствах массовой информации и при формировании и сводного списка (ведомости) участников награждения ценными подарками и памятными сувенирами.

Я проинформирован (а), что под обработкой персональных данных понимаются действия (операции) с персональными данными, включая сбор, систематизацию, накопление, хранение, уточнение (обновление, изменение), использование, распространение (в том числе передачу), обезличивание, блокирование, уничтожение персональных данных соблюдается в рамках исполнения Оператором законодательства Российской Федерации.

Я даю согласие на размещение видеоматериала с участием моего(ей) несовершеннолетнего (ей) сына (дочери) на интернет телеканале (ШкулТВ).

Настоящее согласие действует со дня подписания до дня отзыва в письменной форме.

______________ __________________________ __________

(Дата) (Фамилия, инициалы) (Подпись)

**4-мĕш хушăм**

Заявление

Просим вас зарегистрировать ________________________________________________________________

________________________________________________________________________________________

для участия в Межрегиональном конкурсе "Эпĕ пĕчĕкçĕ чăваш - 2018" согласно прилагаемой заявке.
Полностью гарантируем, что при публикации нашей работы ____________________________

________________________________________________________________________________________

на канале "ШкулТВ" (https://www.youtube.com/user/civmih2) не будут нарушены авторские права третьих лиц.

Подпись ___________________________ Дата_______________________________

(Все заявления подтверждаются руководителем школы или должностным лицом местного самоуправления - сельского или городского поселения : печать, подпись)

# Харпӑр даннӑйсемпе усӑ курма ирӗк пани

Эпӗ, ________________________________________________________________

*(гражданинӑн ячӗ, хушамачӗ, ашшӗ ячӗ)*

Раҫҫей Федерацийӗн «О персональных данных» федераллӑ саккунӑн 9-мӗш статьи ыйтнипе килӗшӳллӗн Чӑваш чӗлхин инҫет вӗренӳ центрне (малалла — Оператор) хамӑн ҫула ҫитмен ачан персоналлӑ даннӑйӗсемпе (хушамачӗпе, ячӗпе тата ашшӗ ячӗпе, тата ытти даннӑйсемпе) ӗҫлеме ирӗк панине ҫирӗплететӗп:

________________________________________________________________

*(гражданин кам пулнине ӗнентерекен документ, сери, номерӗ, ӑҫта тата хӑҫан панӑ, адрес)*

________________________________________________________________

________________________________________________________________

Ман персоналлӑ даннӑйӗсемпе эпӗ массӑллӑ информаци хатӗрӗсенчи публикацисенче, ҫӗнтерӳҫӗсене палӑртма тата парнесемпе тивӗҫтерме хатӗрлекен хутшӑнакансен списокне тунӑ чухне усӑ курма ирӗк паратӑп.

Персоналлӑ даннӑйсемпе усӑ курнӑ чухне Раҫҫей Федерацийӗн саккунӗпе килӗшӗллӗн Оператор хӑйӗн ӗҫӗнче вӗсене пухма, системӑлама, ҫӗнетме, ирӗк панӑ вырӑнсене вырнаҫтарма, сӑнсӑрлатма, курӑмсӑрлатма тата хуратма пултарни пирки мана ӑнлантарса панӑ тесе пӗлтеретӗп.

Хам ӳкерӗнме хутшӑннӑ видеоматериалсене эпӗ «Шкул ТВ» интернет-телеканалта вырнаҫтарма ирӗк паратӑп.

Ку ирӗк паракан килӗшӳ ӑна пӗтерме ыйтса ҫыриччен вӑйра тӑрать.

__________ __________________ _______

*(Дата) (Хушамат, инициалсем) (Алӑ пусни)*

# Харпăр даннăйсемпе усă курма ирĕк пани (çул çитменнисемшĕн)

Эпĕ, ___________________________________________

*(çул çитмен гражданинăн саккунлă представителĕн ячĕ, хушамачĕ, ашшĕ ячĕ)*

Раççей Федерацийĕн «О персональных данных» федераллă саккунăн 9-мĕш статьи ыйтнипе килĕшӳллĕн Чăваш чĕлхин инçет вĕренӳ центрне (малалла — Оператор) хамăн çула çитмен ачан персоналлă даннăйĕсемпе (хушамачĕпе, ячĕпе тата ашшĕ ячĕпе, тата ытти даннăйсемпе) ĕçлеме ирĕк панине çирĕплететĕп:

___________________________________________

*(çула çитмен гражданинăн хушамачĕ, ячĕ тата ашшĕ ячĕ)*

___________________________________________

*(гражданин кам пулнине ĕнентерекен документ, сери, номерĕ, ăçта тата хăçан панă, адрес)*

___________________________________________

___________________________________________

Çула çитмен ман ачан персоналлă даннăйĕсемпе эпĕ массăллă информаци хатĕрĕсенчи публикацисенче, çĕнтерӳçĕсене палăртма тата парнесемпе тивĕçтерме хатĕрлекен хутшăнакансен списокне тунă чухне усă курма ирĕк паратăп.

Персоналлă даннăйсемпе усă курнă чухне Раççей Федерацийĕн саккунĕпе килĕшĕллĕн Оператор хăйĕн ĕçĕнче вĕсене пухма, системăлама, çĕнетме, ирĕк панă вырăнсене вырнаçтарма, сăнсăрлатма, курăмсăрлатма тата хуратма пултарни пирки мана ăнлантарса панă тесе пĕлтеретĕп.

Ман çула çитмен ача ӳкерĕнме хутшăннă видеоматериалсене эпĕ «Шкул ТВ» интернет-телеканалта вырнаçтарма ирĕк паратăп.

Ку ирĕк паракан килĕшӳ ăна пĕтерме ыйтса çыриччен вăйра тăрать.

____________ ______________________ __________

(Дата) (Хушамат, инициалсем) (Алă пусни)